# ТАРСА ПЫТАНĂР, ÇЫНСЕМ! ЯНЫЧАРСЕМ ЧĔРĔЛСЕ ТĂНĂ!

**Денис ГОРДЕЕВ**

Писатель

ĔÇЕ кайма пуçтараннăччĕ. Телефон сасă пачĕ. Пăлханса ӳкнĕ çын сассине тӳрех уйăрса та илеймерĕм.

– Паянхи «Хыпара» вуларăн-и? – ыйтать ку çын сывлăх та сунма мансах.

– Çук-ха, – тетĕп.

– Янычар сăмаха илтнĕ-и?

– Илтмесĕр! Пирĕн ăру пăлхар писателĕн Иван Вазовăн «Пусмăр айĕнче» эпопейине вуласа ӳснĕ.

Телефон пиклетсе кайрĕ.

Кăçалхи нарăсăн 20-мĕшĕнче чăваш халăх хаçачĕ «Турци тĕррисем» ярăмран ултă сăвă пичетленĕ. Ытти чухнехи пек авторăн хушаматне ярăм ятĕнчен çӳлерех лартман, çавăнпа ăна тӳрех асăрхаймарăм. «Янычарсем» тени тӳрех куçа тăрăнчĕ.

Ĕненĕр-ха, тăванăмсем, эсир те пулсан. Эпĕ çаплах хама хам ĕненейместĕп. Ниушлĕ?! – тесе ыйтма çаплах пăрахаймастăп. Аптăранипе алă айĕнчи словарьсенчен пуçласа «Пысăк совет энциклопедийĕ» таранах уçкаласа тухрăм.

Çаплах хамран хам ниушлĕ тесех ыйтас килет, çав ыйтăвах ыттисене те парас килет. Ниушлĕ?!..

Ниушлĕ янычарсене мухтас вăхăт çитрĕ?

Апла ыран «Турци тĕррисен» авторĕ-и, урăххи-и фашизма, холокоста, геноцида, расизма мухтаса сăвă ярăмĕ пичетлеме пултарать. Ним те мар. Сăвă вĕçĕнче асăннă сăмахсенчен хăшĕ мĕне пĕлтернине кăна кăтартса хăварма манмалла мар. **Янычар** тени, сăмахран, турккăлла **çĕнĕ çар** тени кăна пулать. Фашизм итальян чĕлхипе çыхă е тĕрке тенине кăна пĕлтерет.

Çĕнĕ çара та мухтаса юрлама пулать, çыхă е тĕрке каллех поэзи еннеллех туртакан сăмахсем.

Янычарсем ытла та паттăр,
Янычарсем вĕр-çĕннисем.
Хăвачĕпе сехре хăпартнă
Çак çамрăк çарăн çыннисем.
«Çĕнĕ çарсем – арсем килеççĕ!» –
Чăл-пар салантăр пур тăшман!

Çĕкленӳллĕ-и? Çĕкленӳллĕ! Мухтавлă-и? Мухтавлă! Анчах авторне урра! çĕклеме тăхтăр-ха.

Маншăн урăхларах янраççĕ илсе кăтартнă йĕркесем.

Фашистчарсем ытла та паттăр,
Фашистчарсем вĕр-çĕннисем...

Кашни халăхăнах тĕнче историйĕ умĕнче хăйĕн мăнаçлăхĕпе мухтавĕ те, намăсĕ те пур. Вырăс халăхĕн намăсĕ – опричнина, нимĕçсемпе итальянсен фашизм, Америка çыннисен расизм пулсан, турккăсен истори умĕнчи намăсĕ шăпах янычарсем пулса тăраççĕ те.

Хаçатра пичетленнĕ сăвăсен авторĕ «янычар» сăмаха çĕнĕ çар тесе куçарни тĕрĕсех. Анчах «янычар» сăмах турккăсемшĕн хăйсемшĕн те, уйрăмах Христос тĕнĕпе пурăнакан халăхсемшĕн хăйĕн малтанхи пĕлтерĕшĕпе çӳреме тахçанах пăрахнă.

«Янычар» сăмахра çĕнĕ çар пĕлтерĕшĕн сĕмĕ те юлман. Дунайçи пăлхарсемшĕн, эрменсемшĕн вăл виçесĕр тискерлĕх, пуç касан тени пулать. Вырăсла словарьсенче пуринче те пур вăл. Пуринче те пĕр пек – полицайсемпе карательсен çарĕ, Турци абсолютизмĕн тĕрекĕ тесе ăнлантарса панă.

Атьăр-ха, янычарсем камсем пулнипе тĕплĕнрех паллашар. Акă «Совет истори энциклопедийĕн» 16-мĕш томне уçса хутăм /1976 çулта пичетленсе тухнă/. Вулатпăр. Тĕрĕсех, сăмах пĕрен куçарсан, «çĕнĕ çар» тениех пулать. Çак çĕнĕ çара XIV ĕмĕрте Пĕрремĕш Мурад султан вăхăтĕнче тыткăнри яшсенчен йĕркеленĕ. Каярах Христос тĕнĕпе пурăнакан халăхсен ывăл ачисене вăйпа чуралантарса, вăйпа ислам тĕнне йышăнтарса, ислам фанатикĕсем туса таврари халăхсене пăхăнтарма янă. Вĕсем пурте султан чурисем шутланнă. Мăшăрланма, çемьелленме юраман вĕсен. Пурнăç ырлăхĕ пĕрре кăна пулнă – вĕлермелле, çаратмалла, çунтармалла. Çакăншăн кăна султан ырланă вĕсене. Çакăншăн кăна тăрантарнă, тумлантарнă. «Турци тĕррисен» авторĕ те пĕлет ăна.

Мĕн кирлине йăлтах çитернĕ,
Ĕçтернĕ йăлт мĕн кирлине.
Тен, çавăнпа вĕсем çĕнтернĕ,
Туйса патша ыр кăмăлне.

Патша мар, султан тенĕ пулсан, вырăнлăрахчĕ. Анчах эпĕ сăвă карти-йĕркине тишкерес тĕллев тытман.

Осман империйĕ пăхăнтарнă халăхсенчен «ЮН налукĕ» пуçтарнă. Христос тĕнĕпе пурăнакан кашни çемьен янычар пулма ывăл ача памалла пулнă. Султан «ырлăхне» ытарайми пулсан, çав яш хăйне çуратнă ашшĕ-амăшнех пуç каснă. Çакна сăвă ярăмĕн авторĕ калама çук пысăк паттăрлăх тесе ĕнентересшĕн, çулăмланса çырать.

«Янычарсем килеç!» – тесессĕн,
Тăшман саланнă-мĕн чăл-пар.

Полицайсемпе карательсен тăшманĕ кам пулни пуриншĕн те паллă пуль тетĕп. Пуç çĕклеми çĕр сухалакан, кут хыçми хирте ĕштеленекен.

Тăвата ĕмĕр Осман империйĕн пусмăрĕнче асапланнă Дунайçи пăлхарсемшĕн кăна мар, Кавказ халăхĕсемшĕн те, украинсемшĕн те, вырăссемшĕн те янычар сăмах ылхан сăмахĕ пулса чĕлхене кĕнĕ. Паян унăн урăх пĕлтерĕшĕ çук. Иртнĕ ĕмĕрсенчи ăслă çынсем янычарсене мур чирĕ тесех хакланă. Мур килсе тухсан ваттинеĕттине тиркемесĕр шăла-шăла тухса кайнă. Çавнах тунă янычарсем те.

Эпир, чăвашсем, Турциpен аяккарах пурăннă та, янычар мурĕ пирĕн патах çитеймен. Эпир вăл сăмаха вырăссенчен илнĕ. Вырăс каланă пĕлтерĕшпех.

Кирек епле тискерлĕхĕн те вĕçĕ пулмаллах. Янычарсен те кун-çулĕ вĕçленнĕ. Султана хăйне сирпĕтме тăрсан, Иккĕмĕш Махмуд 1826 çулта янычарсене тĕп тăват. Янычарсен ылханлă ячĕ кăна юлать.

Анчах мĕншĕн чĕртсе тăратасшăн-ха вĕсене чăваш сăвăçи? Çакна тĕшмĕртеймĕп-и тесе пăхмасăр калама вĕреничченех вуларăм «Янычарсем» сăвва.

**Чана хули инçетре,**
**Эпир унта çитетпĕр, –**
тесе юрланă иккен янычарсем.
**Чăваш çĕрĕ инçетре,**
**Эпир унта çитетпĕр, –**
тенĕ пек ăнланмалла-ши çакна?

Наци намăсне уякан турккăсем хăйсем пичетлеменех пулĕччĕç ку йĕркесене. Янычарсене ирĕклĕх çарĕ пек кăтартма хăтланни тата мĕне пĕлтерет? Ăмсанать вĕсене автор, хăйне те янычар пекех туять.

Аптăранипе ĕнтĕ темле те шайлаштарса пăхрăм. Ку таранччен Раççей халăхĕ умĕнче, Мускав умĕнче ырă ятлă пултăмăр, пирĕн республикăра наци тĕркешĕвĕсем çук, наци хирĕçĕвĕсем çук, наци тăнăçлăхĕ тăрать тесе ӳстермесĕр, вăлтмасăр каларăмăр. Çакă килĕшми пулчĕ-и? Çакă йăлăхтарса çитерчĕ-и? Тата тĕнсен килĕшĕвĕ çырлахтарми пулчĕ-и? Янычар сăмах православи тĕнне уяса пурăнаканăн чĕрине епле касма пултарнине сăвă ярăмне çырса пичетленекенĕн пĕлмелле пулман-и?

Ярăм авторĕ хам пек кăна ахаль çын пулнă пулсан, Чăваш патшалăхĕн наци политики улшăнчĕ-шим вара тенĕ шухăш пуçа пырса кĕресех çукчĕ пулĕ.

Николай Пейков чăвашла вуламасть, анчах вăл янычар сăмаха «Чебоксарские новости» хаçатра тĕл пулнă. Манăн унран каçару ыйтма тиврĕ. Пăлхар çыннишĕн янычар тени шуйттан, сатана тени кăна та мар, хăрушăрах сăмах пулса тăрать. Ыттисенчен камăн каçару ыйтмалла?

Иртнисене йăлтах пĕлместпĕр тесе тӳрре тухма пăхать ярăм авторĕ. Пурне те пĕлме никама та пӳрмен. Анчах тĕнче ылханакан тискерлĕхе пĕлмеллех.